Акци

# Туберкулез чирне тупса палăртма

Мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 20-мĕшĕччен пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ «Шурă ромашка» акци иртет. Çак акци – туберкулез чирне хирĕç кĕрешес меслетсенчен пĕри. Çавăнпа та палăртнă тапхăрта пурне те ĕç кунĕсенче 8 сехетрен пуçласа 15 сехетчен флюорографи кабинетĕнче тӳлевсĕр йышăнаççĕ. Шăмат кунсенче – апрелĕн 4, 11, 18-мĕшĕсенче – тĕрĕсленес текенсем 9 сехетрен пуçласа 13 сехетчен килме пултараççĕ. Флюорографи тĕрĕслевĕ туберкулеза тата ытти чирсене аталанма пуçласанах тупма пулăшать.

Юлашки вăхăтра çирĕп тытăнса тăракан туберкулез чирĕ сарăлса пыни палăрать. Çавăнпа та тĕрĕслеве пырассине кая ан хăварăр. Сывлăх пирки ытларах шутлăр.

2007 çулта пирĕн районта ӳпке туберкулезĕпе çĕнĕрен 26 çын чирленĕ, вĕсенчен 11 çынна флюорографи меслечĕпе тупса палăртнă. 2008 çулта вара 31 çынна туберкулезпа чирли çинчен диагноз лартма тивнĕ. Вĕсенчен 19-шне – флюорографи тĕрĕслевĕ хыççăн. Виçĕм çул çак чирпе чирлесе 3 çын, пĕлтĕр – 4 çын çĕре кĕнĕ.

Туберкулезран сываласси чире малтанхи тапхăрĕнчех сиплеме пуçланинчен нумай килет. Çавăнпа та сывлăха тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Çемьерисене те, тăвансене те флюорографи тăни çак ĕçре пысăк пулăшу панине ăнланса илме пулăшмалла.

Йывăр чирсенчен чылайăшĕ, вĕсен шутĕнче туберкулез та, организма хавшатма пуçласан тин хăй пирки пĕлтерет. Кун пек чухне вара чирлисене нумай вăхăт хушши сиплеме тивет. Туберкулезпа чирлисем чир пуçламăшĕнче хăйсене лайăххах туяççĕ: ĕçлеççĕ, спорт вăййисене те хутшăнаççĕ... Сăнпитрен те сывă курăннăран, ун чухне вĕсем хăйсем чирли çинчен пĕлмеççĕ-ха. Ăнсăртран ӳпкерен юн каймасан е юнлă сурчăк тухма пуçласан тин врач патне пулăшу ыйтма каяççĕ. Ватă çынсем те хăйсем ӳсĕрме тытăннине ватлăх тата пирус туртни çине йăвантараççĕ. Çавăнпах вĕсем поликлиникăна та çӳресшĕн мар. Анчах тĕрĕслевсем çакнашкаллисенчен чылайăшĕ ӳпке туберкулезĕпе чирлине кăтартаççĕ.

Çын туберкулезпа чирлесен час ывăннине, тарланине, температура ӳснине тата хăй вăйран кайнине асăрхать. Çак паллăсем ӳпкен ытти чирĕсемшĕн те пĕр килеççĕ. Акă мĕншĕн тӳрех врач патне каймалла.

Туберкулез чирĕ вăрттăн иртнине вăхăтра тупса палăртма флюорографи меслечĕ нумай пулăшать. Çакăн пек тĕпчевсене 15 çула çитнĕ çамрăксенчен пуçласа тăваççĕ. Флюорографи çын организмне сиен кӳмест. Врачсем сăнанă тăрăх, флюорографипе нумай вăхăт тĕрĕсленменнисем хушшинче туберкулезăн йывăр формипе чирлисем тĕл пулаççĕ. Ӳпке туберкулезĕпе чирлисем сывă çынсемшĕн пысăк хăрушлăх кăларса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен туберкулез – ерекен чир. Акă мĕншĕн кил хуçи хĕрарăмĕсенчен пуçласа пенсионерсем таранах çулталăкра пĕрре те пулин флюорографипе тĕрĕсленмелле.

Юлташсем, хăварăн сывлăха тĕрĕслесех тăрăр! Пирĕн районта 2 флюорографи кабинечĕ ĕçлет: Муркашри тĕп больницăра тата Мăн Сĕнтĕрти больницăра. Вĕсем пурне те тӳлевсĕр йышăнаççĕ.

**О. МИХАЙЛОВА,**
**районти тĕп больница фтизиатрĕ.**

Милици хроникинчен

## Суя документсемшĕн явап тытмалла

Темĕнле ĕç тусан та – ыррине е усаллине – пурпĕрех ун пирки пĕлекенсем пулĕç. Ку çапла пулмасан, ĕлĕкех «уй куçлă, вăрман хăлхаллă» тени паян кунччен пымĕччĕ. Ялти пурнăç вара ун çине вăйлăрах витĕм кӳрет.

Пирĕн районти пĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хăйĕн ĕç вырăнĕпе усă курса тупăшсене самаях ӳстернĕ. Анчах ял тăрăхĕнне мар, хăйĕнне. Документсем çине пуçлăх алă пусать, вырăнта ирттермелли ĕçсем çинчен йăлтах пĕлекенĕ те вăлах-çке. «Апла пулсан çак самантпа усă курмаллах», – тесе шутланă пулас вырăнти пуçлăх.

Масар çинче тирпейлемелле, парк тавра та карта тытмалла, ял тăрăхĕн администраци çуртĕнче те юсаса çĕнетмелли пайтах пулнă кунта. Паллах, çак ĕçсене туса ирттерсен акт çырмалла. Укçа-тенкĕне ăçта тата мĕнлерех усă курнине палăртас пулать. Çуралнăранпах суя мĕнне пĕлменни çав документсене тĕп-тĕрĕс çырса парĕччĕ ĕнтĕ. Ку пуçлăх вара «ăслăрах» пулнă. Вуннă ытла суя акт çырма ĕлкĕрнĕ вăл 2005 çултан пуçласа 2007 çулччен. Ĕçне те шăпах çавăн чухлĕ туса ирттернĕ. Хакĕ вара? Пуçлăхран вырăнти халăхăн мĕнле иртес? Укçи, вĕрен пек явăнса, хуçан кĕсйине кĕнĕ те кĕнĕ...

Çак «укçа вĕренĕн» вĕçне Уголовнăй кодексăн 292 статйине «тĕвелесе çыхса хунине» малтанах «курайман» шельмă. Виçĕ-тăватă çултан мĕн пулассине ăçтан пĕлес ĕнтĕ? Вĕренĕн вара вĕçĕ пурах.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Спорт хыпарĕсем

## Кил хуçисем çĕнтернĕ

Мартăн 21-мĕшĕнче Муркашри вăтам шкулăн тирĕнче ĕç коллективĕсен спартакиади майĕпе пăшалтан тĕл перессипе ăмăрту иртрĕ. Пурĕ 5 команда хутшăннă. Арçынсем хушшинче 1-мĕш вырăна И. Воробьев (МСО «Моргаушская) тухма пултарнă. Хĕрарăмсенчен – М. Столбова (Çатракассинчи вăтам шкул). Пĕтĕмлетӳсемпе командăсенчен чи мала Муркашри вăтам шкул учителĕсем тухнă. МСО «Моргаушская» команди 2-мĕш, Москакассинчи вăтам шкул учителĕсен команди 3-мĕш пулнă. Çĕнтерӳçĕсем парнесемпе дипломсене тивĕçнĕ.

## ОМОНовецсем хăйсен юлташне манмаççĕ

Иртнĕ шăмат кун Муркашри Спорт çуртне республика шайĕнчи ăмăрту спорта юратакансене пуçтарчĕ. 11 çул каялла Дагестанра пуçне хунă Г. Кудьков ОМОНовеца халалласа вун пĕр команда волейболла выляса вăй виçрĕç. Хĕрӳ кĕрешӳре Шупашкарти ОМОНовецсем 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. 2-мĕш тата 3-мĕш вырăнсене «Передовик» хуçалăх тата «Муркашри сĕт завочĕ» пĕрлешӳ командисем тухнă. Мала тухнисене медальсемпе тата грамотăсемпе чысланă.

**ХАМĂР ИНФ.**

**ООО «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района объявляет комиссионный отбор предприятий и организаций по капитальному ремонту многоквартирных домов на 2009 год**

| Место выполнения работ (адрес многоквартирного дома) | Объем работ (площадь оъекта, кв.м.) | Краткое описание работ | Стоимость работ, руб. | Сроки выполнения работ |
|---|---|---|---|---|
| д. №22 по ул. Заводская в с.Б.Сундырь | 1325,0 | Ремонт крыши, ремонт подвала | 996 582 | После заключения договора в течение двух месяцев |
| д. №32 по ул. Новая в с.Б.Сундырь | 853,0 | Ремонт внутридомовых инженерных систем, ремонт крыши, ремонт подвала, утепление и ремонт фасада | 2 560 118 | После заключения договора в течение двух месяцев |
| д. №2 по ул. Центральная в д.Ярославка | 383,0 | Ремонт внутридомовых инженерных систем, ремонт крыши | 733 093 | После заключения договора в течение двух месяцев |
| д. №10 по ул. 50 лет Октября в с.Моргауши | 1370,0 | Ремонт крыши, ремонт подвала | 1 474 651 | После заключения договора в течение двух месяцев |
| д. №38 по ул. Ленина в с.Моргауши | 1375,0 | Ремонт крыши, ремонт подвала и утепление и ремонт фасада | 3 251 739 | После заключения договора в течение двух месяцев |
| д. №32 по ул. Ленина в с.Моргауши | 903 | Ремонт внутридомовых инженерных систем, ремонт крыши | 945 975 | После заключения договора в течение двух месяцев |

Документы для участия в комиссионном отборе принимаются в запечатанном конверте не позднее 10.00 ч. 20.04.2009 г. Дата вскрытия конвертов: 10.00 ч 20 апреля 2009 года. Подведение итогов комиссионного отбора в 10.00 ч. 23 апреля 2009 года.

Обращаться в комиссию по адресу: с.Моргауши, ул.Мира, д.6, тел. 62-2-43,63-4-30.

Подробная информация на сайте morgau@cap.ru

**Прогноз погоды с 28 марта по 4 апреля**

www.yandex.ru

| сб 28 | вс 29 | пн 30 | вт 31 | ср 1 | чт 2 | пт 3 | сб 4 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность, небольшой снег | облачно, небольшие осадки | облачно, без существенных осадков | переменная облачность, небольшой дождь | осадки | переменная облачность, небольшие осадки | облачно, небольшие осадки | переменная облачность |
| +2 | +5 | +8 | +10 | +7 | +2 | +4 | +10 |
| -1 | +1 | +7 | +7 | -2 | -3 | +1 | +6 |


Продаю ВАЗ-2110, 2004 года выпуска, люкс, бортовой компьютер, эл. подогрев сидений, эл. регулировка зеркал, музыка MP3, тонировка, цвет амулет (темно-зеленый), пробег 80 тыс. км., бензин+газ. Цена договорная.
Тел.: 8-937-371-00-00.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Гербициды, протравители от производителя. Дотации, рассрочка, обмен на зерно.
Тел.: 8352-73-48-64, 8-902-327-18-53. 2-2.

КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ ГРАЖДАН
“АГРОКРЕДИТ”
ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ
ЗАЙМЫ
ПРИНИМАЕМ НА ХРАНЕНИЕ
СБЕРЕЖЕНИЯ
НА ВЫГОДНЫХ УСЛОВИЯХ
Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.4
тел.: 62-8-13
Является членом Республиканского Союза КПКГ
Услуги предоставляются пайщикам кооператива

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150, керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмасса, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 5-10.

*Кирпич м-100,м-125,м-150;
керамический одинарный полуторный;
силикатный белый, желтый, серый.
*Блоки керамзитные, газосиликатные.
*Кольца колодезные.
*Пеноблоки.
*Шифер.
*Цемент.



2-5.

УСЛУГИ МАНИПУЛЯТОРА
Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-88-00-483.

Требуются парикмахеры с опытом работы в салон-парикмахерскую «Дива» (ФСК «Сывлăх»). Обращаться по тел.: 8-960-307-50-88.

Продается дом кирпичный с хозяйством в с. Моргауши. Тел.: 8-905-340-35-44, 63-4-12.

Вурнарское ХПП-филиал ГУП ЧР «Чувашхлебопродукт» Минсельхоза Чувашии предлагает предприятиям и населению:
- пшеницу фуражную – 5 руб. 20 коп. за кг.;
- ячмень фуражный – 5 руб. за кг.;
- отруби пшеничные – 3 руб. за кг. а также муку всех сортов.
При заявке больше тонны доставка БЕСПЛАТНО.
Тел.: (835)37 2-56-18, 2-53-59. 1-4.




Закупаем по дорогим ценам: упитанных быков, телок, коров. Тел.: 60-662, 8-937-377-54-94.

30 марта с 9-00 часов до 17-00 часов в ДК с. Б. Сундырь и в ДК с. Моргауши состоится распродажа демисезонной и зимней обуви Кировской обувной фабрики. Каждая пара – 500 руб. Постельное белье – 300 руб.

Блоки керамзитобетонные, цемент, песок, гравмасса, г. Чебоксары. Тел.: 8-927-668-81-10, 8-927-668-84-40. 1-8.

Продаю пиломатериал: хвоя, береза, осина, дуб. Срубы на заказ. Доставка. Тел.: 8-903-389-14-00. 4-8.

Вăкăрсем, тынасем, сурăхсемпе такасем туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57.



Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 27.03.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3860.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.